Мобилизаци вĕрентĕвĕ

# «Террористсен» тапăнăвне сирсе ячĕç, хăйсене тытса чарчĕç














Вăрçă тесен, паян вăл та хăйĕн технологине улăштарчĕ. Хальхи пурнăçра йышлă халăх хушшинче нимĕнпе те палăрман пĕчĕк ушкăнсем хăйсем суйласа илнĕ объектра сăтăрла ĕç тăвасси паянхи вăрçăн никĕсне выртрĕ. Çак хăрушлăхран пăрăнса иртме пирĕн ялан сыхă тăмалла, талккишпех саралнă фронтра юнашаррисене пулăшма ялан хатĕр пулмалла. Пĕччен çын çапăçу хирĕнче салтак мар тени çĕнĕлле лару-тăрура пĕлтерĕшне ӳстерчĕ кăна.

Августăн 1-мĕшĕнче Муркаша ирхи 7 сехет çурăра района «хăрушă» хыпар çитрĕ. Сăлтавĕ: тивĕçлĕ органсем пĕлтернĕ тăрăх Мăн Сĕнтĕрти Çăкăр завочĕ çине «террористсем» тапăнма пултараççĕ. Вăрçă. Никам чĕрине те лăпкăлăхра хăварма пултарайман хăрушлăх. Хаçат-журнал вуласа, радио итлесе, телевизор пăхса кашниех тĕнчери пĕтĕмĕшле лару-тăрăва пĕлетпĕр. Хĕвел Анăçĕнчи хăш-пĕр çĕршывсен Раççейпе Беларуç Республики тĕлĕшпе территори килĕшĕвĕ çукки, Эстонире Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин палăкĕсене пăсни, НАТО Хĕвел Тухăçнелле вăй илсе пыни – кулленхи ӳкерчĕк. Нивушлĕ?.. Çирĕплетнĕ йĕркепе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов администрацин ертсе пыракан ĕçченĕсене "тулли" çар хатĕрленĕвĕпе пухăнма, 9 сехетрен ку тĕлĕшпе ятарлă хушу ĕçлеме пуçлассине алă пусса пĕлтерчĕ, администраци ĕçченĕсемпе канашлу ирттерсе камăн мĕнле ĕç пурнăçламалли пирки конкретлă ыйтупа пăхса тухрĕ. Кун хыççăн район пĕр алăри пек ĕçлеме пуçларĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата архитектурăпа капиталлă строительство управленийĕн пуçлăхĕ В. Никитин экономика объекчĕсене планпа килĕшӳллĕн ĕçлеме хатĕрленипе пĕрлех çар подразделенийĕсене кирлĕ чухлĕ техника уйăрассине тата юсассине, апат-çимĕç ыйтăвне, предприятисемпе организацисене уйрăм йĕркепе финанслассине пăхса тухнипе пĕрлех район администрацийĕн, çар комиссариачĕн, районти çыхăну узелĕн, перекет банкĕн, районти тĕп больницăн çурчĕсене, Муркашри шыв башнисене, электричество подстанцийĕсене сыхлава илессине йĕркелерĕ.

Район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ А. Краснов асăрхаттарăва ял тăрăхĕсене вăхăтра çитерни, управлени органĕсене вăрçă вăхăтĕнчи организаципе штат структури çине куçарни, команда пунктне йĕркелени тата ытти оперативлă ĕçсем вырăнлă пулчĕç.

Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн пуçлăхĕ Н. Милютин йывăр вăхăтра çухалса кайманни, кĕске хушăрах гражданла оборонăн гражданла организацийĕсене ĕçе кĕртни, пушар хăрушсăрлăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлани тата ирĕке кайнă çулăмпа кĕрешме вăйсене мобилизацилени, индивидуаллă хӳтĕлев хатĕрĕсене çителĕклĕ илсе тухни, вĕсене валеçмелли пунктсем уçни пĕтĕмĕшле лару-тăрăва уçăмлăх кĕртме пулăшрĕ. Социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н. Петрова халăх хушшинче ăнлантару ĕçĕ туни те вырăнлă пулни тата район администрацийĕн ытти специалисчĕсемпе ертӳçисем те хăйсен кунашкал вăхăтри ĕçĕсене ответлăха туйса пурнăçланăран районта ирттернĕ вĕрентӳ Раççей Федерацийĕн 12 регионĕнчен килнĕ делегатсемшĕн тĕслĕх выраннех пулчĕ.

– Питĕ ăста йĕркеленĕ. Чрезвычайлă лару-тăрура тата вăрçă вăхăтĕнче хăйсем мĕн тума пултарнине Муркашсем, ман шутпа, чи çӳллĕ шайра кăтартрĕç. Районти ответлă специалистсемпе тĕрлĕ ведомствăсен пуçлăхĕсем пĕр çыхăнура пулни, вĕсем хăйсен ĕçĕ çинчен вĕрентӳ пуçлăхне тӳррĕн доклад туса тăни районта карточка бюровĕпе бронь тата мобилизаци ыйтăвĕсене пĕр иккĕленмесĕр татса пама май панине пăхма кăмăллă, – терĕ Екатеринбургри "Свердловский облпотребсоюзран" килнĕ тĕп инженер С. Смышляев чрезвычайлă лару-тăрура районта пуç пулса тăракан тĕп больница мĕнле ĕçленипе тата вăл вăрçă вăхăтĕнче 400 вырăн хатĕрлеме пултарнипе паллашнă хыççăн. Каламалла, тĕп больница чрезвычайлă кирек хăш лару-тăрура та 45 вырăн (вăл шутран 5-шĕ ачасем валли) парайрать. Çакна валли кунта врачсемпе сестрасен икĕ бригади пур. Çакнашкал вăхăт валли больницăн 30 çынна 3 талăк тытмалăх медикаментсем çитеççĕ.

Вĕрентĕве хутшăнакансем "Сундырь-Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕпе паллашнă хыççăн вĕрентӳ йĕркипе çак предприяти çине тапăннă «террористсен» усал шухăшĕсене Муркаш районĕ тăрăх ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем сирсе ярсан «террористсем» Ильинка еннелле чакма пуçлаççĕ. Шалти ĕçсен пайĕ ОМОНпа спецназсене пулăшăва чĕнет. Лешсем вара Мăн Сĕнтĕртен тухакан автоçул Ильинка еннелле çавăрăннă çĕрте позици йышăнаççĕ. Акă Мăн Сĕнтĕр енчен пысăк хăвăртлăхпа çăмăл автомашина килни курăнса каять. ОМОНпа ОМСН ĕçленĕ вырăна çитсен пулса иртнĕ кĕске çапăçура йĕрке хуралçисем хăвăрт çапăçура «террористсене» алла илчĕç.

– Эпир паян кунта килнишĕн пĕртте ӳкĕнместпĕр. Муркашсем маттур. Йывăрлăхсем умĕнче çухалса каймарĕç вĕсем. Кашни хăйĕн ĕçне пĕлни мĕне тăрать тата. Эсир кашни ĕç çине хуçалла пăхасси Сирĕн Президентăртан килни пирки пĕр иккĕленӳ те çук, – терĕç вĕрентӳ вĕçленсен Çармăс Республикинчен килнĕ Т. Аршиновапа З. Смородинова.

Пысăк вĕрентӳ хыçа юлчĕ. Умра вара – хĕрӳ вырма.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: вĕрентӳ саманчĕсем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**
















